28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
6
ЮНКУН
108(6859) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ



Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăх государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

27. «Аврора» колхоз (председателĕ Е. А. Казамбеев юлташ, лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ А. Е. Антонов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 111 процент, сыснасем енĕпе 120 процент, сурăхсем енĕпе 141 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай парса татнă, сĕт—65 процент, çăмарта—86 процент панă.

28. Маленков ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ С. В. Васильев юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 116 процент, сыснасем енĕпе 193 процент, сурăхсем енĕпе 154 процент тултарнă. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне вăтам шутпа 100 кĕсререн 71 тиха, 100 ĕнерен 100 пăру, 100 сурăхран 135 путек илнĕ. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 200 процент, сĕт 66 процент, çăмарта 84 процент панă.

29. «Красное Сормово» колхоз (председателĕ П. Н. Майков юлташ, ферма заведующийĕ С. М. Соловьев юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăх енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 101 процент, сурăхсем енĕпе 149 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 160 процент, çăмарта 75 процент панă.

Çак колхозри пăру пăхакан К. Г. Григорьева юлташ кăçал 21 пăру пăхса ÿстерсе ситĕнтернĕ, кашни пăру талăкра вăтам шутпа 750 грамм хутшăннă.

30. «Совет» колхоз (председателĕ П. К. Кириллов юлташ, ферма заведующийĕ И. Г. Герасимов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 100 процент тултарнă. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 185 процент, çăмарта 87 процент панă.

31. «Герой» колхоз (председателĕ С. С. Бартасов юлташ, ферма заведующийĕ П. С. Соловьев юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăх енĕпе 107 процент, сыснасем енĕпе 203 процент, сурăхсем енĕпе 138 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн сĕт-çу 76 процент, аш-какай 84 процент, çăмарта 62 процент панă.

32. «Красное знамя» колхоз (председателĕ М. В. Быков юлташ, ферма заведующийĕ Е. П. Люцева юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăх енĕпе 112 процент, сыснасем енĕпе 111 процент, сурăхсем енĕпе 147 процент тултарнă. 100 сурăхран 145 путек илсе ситĕнтернĕ.

33. «Аврора» колхоз (председателĕ Я. А. Кольцов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ирттерсе тултарнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Арми генералне А. И. Антонова „Çĕнтерÿ" орденпа наградăласси çинчен

Пысăк çапăçусем ирттерес тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн арми генералне Алексей Иннокентьевич Антонова «Çĕнтерÿ» орденпа наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 4-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДУИМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне С. К. Тимошенкăна „Çĕнтерÿ" орденпа наградăласси çинчен

Украинăри 2-мĕш фронтпа 3-мĕш фронтăн пысăк çапăçăвĕсене пĕр-пĕрипе килĕштерсе пырас тĕлĕшпе Верховнăй Главнокомандовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Совет Союзĕн Маршалне Семен Константинович Тимошенкăна «Çĕнтерÿ» орденпа наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 4-мĕшĕ.

ТАСС хирĕçлесе калани

Америкăри Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Европăра пулнă хыççăн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене таврăннă сенатор Брюстер çапла каласа панă: «Лондонри тата Парижри аслă вырăнсенче ларакан çынсем» каланă тăрăх, Совет Союзĕн Берлинри тата Германин Хĕрлĕ Çар йышăннă ытти районĕсенчи власть органĕсем нимĕç специалисчĕсене, адвокачĕсене тата тĕрлĕрен ĕç ушкăнĕсен представителĕсене «пĕтерсе тăкнă» пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: совет çарĕсем контроллесе тăракан районсенче нимĕç интеллигенцине «пĕтерсе тăкнă» тесе каланă сăмахсем пурт суя сăмахсем, вĕсене Совет Союзĕ çинчен элеклес шутпа сарнă.

РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессине уçасси çинчен

Июнĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Кремльте РСФСР Верховный Совечĕн ларуйăвĕнче РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕ уçăлнă.

СУТУ-ИЛУ СПЕЦИАЛИСЧĔСЕН Е ВĔРЕНТСЕ ХАТĔРЛЕССИ

СССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн аслă шкулĕсене—Мускаври Плеханов ячĕпе тăракан халăх хуçалăх институтне, Ленинградри, Харьковри тата Львоври суту-илÿ институчĕсене вĕренме илме пуçланă. Суту-илÿ ĕçне заочнăй вĕренекен институт та вĕренекенсене илме пуçланă. Суту-илÿ институчĕсене кăçал 1.500 студент, техникумсенче—7.000 çын илессĕ. Институтсемпе техникумсенче вĕренекенсен хисепĕ вăрçăччен хинчен ытларах пулать. Украинăра 9 техникума, Симферопольте 1 техникума çĕнĕрен ĕçе янă. Ригăра, Кишеневра, Минскра, Краснодарта, Арзамасра тата Рязань облаçĕнчи Лебедян хулинче çĕнĕ техникумсем уçнă. Юлашки вйçĕ техникум çырласемпе пахча-çимĕçсенчен тĕрлĕ çимĕçсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен товароведсене тата технологсене вĕрентсе хатĕрлессĕ.

Техникумсенче нумайĕшĕнче суту-илÿ предприятийĕсем валли плановиксем хатĕрлекен отделенисем уçнă. (ТАСС)

БЕЛОРУССИРИ САНИТАРИ АВИАЦИЙĔ

Республикăн аякри районĕсенче пурăнакан ĕççыннисене медицина тĕлĕшпе пулăшу парассине лайăхлатас тесе, БССР Халăх Сывлăх Комиссариачĕ Минскра Гомельре хавалт пыма чĕнсен самолетпа вĕçсе кайса медицина пулăшăвĕ памалли станцисем уçнă. Ку станцисенчен санитари самолечĕсем Гродно, Барановичи, Мозырь тата ытти хуласене те çÿрессĕ. Халăха тивĕçлĕ пулăшу памашкăн санитари самолечĕсемпе чи лайăх специалистсем вĕçсе тухса каяççĕ. (ТАСС)

ЭЛĔК, ТĂВАЙ, ЧУРАЧĂК, ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔСЕМ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТМЕЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

ЭЛĔК, июнĕн 5-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 102.4 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 101,4 процент, сыснасем енĕпе 140 процент, сурăхсем енĕпе 143 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **САМСОНОВ.**

* * *

ТĂВАЙ, июнĕн 5-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 104,6 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100,3 процент, сыснасем енĕпе 124.1 процент, сурăхсем енĕпе 132 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **МОЛОСТВОВ.**

* * *

Чурачăк районĕнчи колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 101,9 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 104,9 процент, сыснасем енĕпе 132,5 процент, сурăхсем енĕпе 131,8 процент тултарнă.

* * *

Çĕмĕрле районĕнчи колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 102 процент, сыснасем енĕпе 101,4 процент, сурăхсем енĕпе 135,7 процент тултарнă.

Шăмăршă районĕнчи колхозсем çураки планне тултарнă

Шăмăршă районĕнчи колхозсем июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне çуракин государство планне тултарнă. 8.029 гектар вырăнне 8.030 гектар акнă. Халĕ планран ирттерсе çĕрулми лартаççĕ.

Ĕнесемпе тислĕк турттараççĕ

ТĂВАЙ, июнĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Çураки планне районри колхозсем паянхи кун тĕлне 96 процент ытларах тултарнă. Малта пыракан «Первое мая», «8-ое Марта», «Пламя», «Новый путь», Молотов, Чапаев, Мичурин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем те çуракине пĕтерчĕç. Çураки пĕтернĕ колхозсем çĕртме тума тытăнчĕç. МТС тракторĕсем, 19-мĕш бригадăсăр пуçне, çĕртме тума тытăнман-ха. Тракторсене валли çителĕклĕ горючи турттарса килменни ĕçе чăрмантарса пырать.

Кăçал çураки вăхăтĕнче районĕпе 320 вăкăрпа ĕç курнă, анчах та вĕсене çĕртме тăвас ĕçе нумай колхозсенче явăçтарман.

Çĕртме тăвас ĕç уйрăмăнах Смидович ячĕпе тăракан колхозра аван пырать. Колхоз председателĕ Якимов юлташ 30 вăкăрпа тислĕк турттарассине организациленĕ. Кунта икĕ кун хушшинче 30 гектар çĕртме тунă. «Звезда», «Искра Ильича», «Социализм» колхозсенче те ĕнесемпе тислĕк турттараççĕ.

Г. КУРАКИН,
Районри çĕрç пайĕн заведующийĕ.

МИХАЙЛОВ БРИГАДИ КУÇСА ÇÿРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВ ИЛНĔ

ВĂРНАР, июнĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Июнĕн 2-мĕшĕнче кунта МТС-ри трактористсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çуракинчи ĕççен итогĕсене пăхса тухнă.

Хĕрлĕ Ялавлă Вăрнар МТС коллективĕ кăçалхи çуракине ăнăçлăн ирттерчĕ. Çуракинче тракторсемпе тумалли ĕççен планне 186 процент ытларах тултарнă. МТС тракторсемпе сухалас ĕçе кăна мар, сеялкăпа акас плана та 127 процент тултарнă. Çуракинче тракторсемпе тăта ытти машинăсемпе тунă ĕççене колхозсенче пурне те йышăннă. МТС-ри пур бригада та плана ирттерсе тултарнă. Чăваш республики 25 çул тултарнă май илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, МТС коллективĕ тракторсемпе 8208 гектар сухаларĕ, урăхла каласан, кăçалхи тракторсемпе тумалли ĕççен планне (аван çапассисĕр пуçне) 53 процент тултарнă. Хальхи вăхăт тĕлне 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 164 гектар сухаланă. МТС-ри 18 бригадăран 9 бригада çуракинче тракторсемпе тумалли ĕççен планне 200 процентран ирттерсе тултарнă. 13 трактор бригадине коммунистсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен производстварти ĕçне тунă çĕртех агитацине пропаганда ĕçне та лайăх тăваççĕ, кулленех политинформаци ирттереççĕ.

7-мĕш бригадăна Алексеев юлташ ертсе пырать. Çак бригада кăçал 208 гектар вырăнне 691 гектар сухаласа плана 324 процент тултарчĕ. Çураки ĕçне ăнăçлă вĕçленĕ хыççăнах çĕртме сухи тума тытăнса, паянхи куна 60 гектар ытла сухаланă. «СТЗ» маркăллă тракторпа У. Порфирьева трактористка 43 гектар вырăнне 156 гектар сухаланă. Григорьева юлташ та 148 гектар сухаланă. Капирова коммунистка, Отечественнăй вăрçă инвалиçĕ А. Николаев юлташсем те хăйсен планне икĕ хут ытла тултарнă.

2-мĕш бригадăна Г. Мишаков юлташ ертсе пырать. Çак бригада та хăйĕн планне 250 процент тултарнă. Мишанова трактористка 43 гектар вырăнне 109 гектар, Кузьмина—110 гектар сухаланă. Иванов тракторист 50 гектар вырăнне 128 гектар сухаланă.

Костромкин юлташ ертсе пыракан 18-мĕш бригада та çуракинче ăнăçлă ĕçленĕ. Ку бригадăн план тăрăх 148 гектар сухаламалла пулнă, вăл 317 гектар сухаланă. Халĕ бригада çĕртме 100 гектар ытла сухаланă. Çак бригадăри Таня Захарова комсомолка 43 гектар вырăнне 140 гектар сухаланă.

Çуракинче уйрăмăнах К. Михайлов юлташ ертсе пыракан 14-мĕш бригада пысăк тухăçлăхпа тата лайăх ĕçленĕ. Вăл çураки планне 267 процент, тракторсемпе çулталăкра тумалли плана 108 процент тултарнă. Михайлов юлташ бригади паянхи кун тĕлне 212 гектар çĕртме тунă. Çак бригадăри И. Егоров тата унпа улшăнса ĕçлекен А. Иванов юлташсем 389 гектар сухаланă. Çак трактористсем газогенераторлă тракторпа ĕçлесе Вăрнар МТС-че кăна мар, республикăра та мала тухнă. Н. Егорова трактористка «СТЗ» маркăллă тракторпа 226 гектар сухаланă. Çапла вара Михайлов юлташ ертсе пыракан бригада ытти бригадăсенчен нумай лайăхрах ĕçленине пула, МТС-ра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Бригадăна МТС дирекцийĕн, партипе профсоюз организацийĕсен куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

Михайлов юлташ куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава илсе, Чăваш республики 25 çул тултарнă уяв тĕлне тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕççен планне ирттерсе тултарма сăмах панă. Тракторист И. Егоров юлташ урапаллă тракторпа кăçал 1000 гектар сухалама обязательство илнĕ.

Канашлура «Первое мая» колхоз председателĕ Васильев юлташ, МТС тракторĕсемпе ĕçлекенсем ĕççен хăвартлăхĕшĕн кăна мар, пахалăхĕшĕн те тăрăшса ĕçлени çинчен каланă.

Канашлу пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Канашлура пулнă трактористсемпе трактористкăсем пĕр кăмăллă пулса Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле тракторсемпе тумалли ĕççен планне 100 процент ытла тултарма обязательство илнĕ.

Халĕ МТС-ра комбайнсене тата тырпул пухса кĕртме кирлĕ ытти машинăсене юсаççĕ. Паянхи кун тĕлне МТС тракторĕсемпе 1250 гектар ытла çĕртме сухи тунă.

А. ПЛАТОНОВ,
МТС-ри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Колхозсене МТС начар пулăшать

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Чылай колхозсем çураки пĕтернĕ хыççăнах çĕртме пуссине тислĕк турттарма тата çĕртме тума тытăнчĕç. Çĕртме тăвас ĕç уйрăмăнах «Вулкан», «Звезда», Чăваш Обкомĕ, Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсенче ăнăçлă пырать.

Çĕртме тăвас ĕçре МТС тракторĕсем пачах çителĕксĕр ĕçлессĕ. МТС çураки планне те 61 процент кăна тултарнă. Çураки вăхăтĕнче МТС-ăн 5—6 тракторĕ тăтăшах ĕçлемесĕр ларнă. Çак çитменлĕхсем тракторсене кирлĕ пек юсаманнинчен, трактор пайĕсене çухатса пĕтернинчен килнĕ. МТС çуракинче колхозсене çителĕклĕ пулăшаймарĕ. МТС директорĕ Желтухин юлташ тракторсемпе кирлĕ пек усă курас ĕçе организацилемен, трактористсемпе трактористкăсене социализмлă ăмăртăва явăçтарман. Çуракинчи çитменлĕхсем МТС коллективĕшĕн пысăк урок пулса тăмаллаччĕ. Апла пулин те МТС руководителĕсем, чăн малтанах Желтухин юлташ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшмасть, плана тултарайманнине ялаnах тĕрлĕ сăлтавсемпе ăнлантарса пама тăрăшать. Чăннипе МТС коллективĕ хăйĕн планне тултарайманни пĕтĕмпех ĕçе йĕркелеме пĕлменнинчен килет.

В. КРЫЛОВ.
Районри çĕрç пайĕн заведующийĕ.

Сад тăваççĕ

Элĕк районĕнчи Писĕпри çичĕ çул вĕренмели шкулта (директорĕ Александрова юлташ) вĕренекенсемпе вĕрентекенсем тăрăшнипе сад тума тытăннă. Иртнĕ çулсенче лартса чĕртнĕ йывăççен хăрнă туратисене иртрĕç, пахчари çÿп-çапсене, хăрнă улмуççисене кăкласа тасатрĕç. Вĕсем вырăнне 70 тĕп улмуççи, 56 тĕп хăмла çырли, 50 тĕп хурлăхан тата шкул карти тавра 100 тĕп ытла акаци лартрĕç.

Г. ХАРИТОНОВ.

Шкулсен ялхуçалăх ĕçĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсен 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕнчи Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă.

Пĕтĕм Союзри ăмăртура Кувакино районĕнчи Турдаковăри çичĕ çул вĕренмелли шкул (директорĕ **А. М. Тихонова** юлташ, комсомол организацин секретарĕ **А. М. Просвирнина** юлташ) пĕрремĕш вырăна йышăннă. Вăл шкула РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш преми панă йышăннă.

Кувакино районĕнчи **Мишуковăри** вăтам шкула (директорĕ **И. Юдин** юлташ, комсомол организацин секретарĕ **А. Морозова** юлташ) СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн иккĕмĕш премине памалла тунă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн тата РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Хисеплĕ грамотипе çак шкулсемпе отрядсене наградăлама йышăннă:

Октябрьски районĕнчи **Шĕнерпуçĕнчи** вăтам шкула (директорĕ **В. Медведева**, комсомол организацин секретарĕ **Р. Меркулова**);

Çĕрпÿ районĕнчи **Старакри** вăтам шкула (директорĕ **Ю. Алексеева**, комсомол организацин секретарĕ **Г. Баранова**);

Советски районĕнчи **Хучашри** вăтам шкула (директорĕ **Н. Владимиров**, комсомол организаци секретарĕ **М. Дмитриева**);

Çĕрпÿ районĕнчи **Виçкассинчи** вăтам шкула (директорĕ **В. Алексеев**, комсомол организацин секретарĕ **Р. Макарова**);

Çĕрпÿ районĕнчи **Ивановăри** çичĕ çул вĕренмелли шкулти вĕренекенсен отрядне (руководителĕ **З. Львова**);

Комсомольски районĕнчи **Хырхĕрринчи** çичĕ çул вĕренмелли шкулти вĕренекенсен отрядне (руководителĕ **Л. Краснова**).

Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн тата РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Хисеплĕ грамотине тата укçан преми çак учительсене пама йышăннă:

Григорьева Пелагия Григорьевнăна — Калинино районĕнчи Туçи Мăратри çичĕ çул вĕренмелли шкулти вĕренÿ пайĕн заведующине, **Николаев** Леонтий Николаевича—Калинино районĕнчи Айкăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учителе; **Муромцева** Евгения Ильиничнăна — Шăмăршă районĕнчи Кĕçĕн Пуянкассинчи пуçламĕш шкулти учительницăна, **Назарова** Мария Анфимовнăна—Кувакино районĕнчи Мишуковăри вăтам шкулти учительницăна, **Щербакова** Вера Владимировнăна—Вăрмар районĕнчи Чулкаçри пуçламĕш шкул заведующине, **Сергеев** Арсений Сергеевича—Вăрмар районĕнчи Пинерти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне, **Петрова** Александра Петровнăна—Вăрмар районĕнчи Пинерти çичĕ çул вĕренмелли шкулти комсомол организацин секретарьне.

Ялхуçалăх ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн тата РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Хисеплĕ грамотипе çак вĕренекенсене наградăлама йышăннă.

Октябрьски районĕнчен — Евдокимова, Р. Самунина; Калинино районĕнчен. — Н. Калашниковăна, Г. Васильевăна; Советски районĕнчен—Языковăна, И. Кузьмина, Е. Трофимовăна, В. Ярзаева, Г. Свешникова; Муркаш районĕнчен — А. Львова; Шăмăршă районĕнчен—Л. Воронцова, И. Космовскине; Вăрмар районĕнчен—В. Волкова, Н. Григорьева, И. Федорова, И. Захарова, С. Платонова, Н. Степанова, Н. Павлова, И. Васильева; Çĕрпÿ районĕнчен — Х. Малова, П. Петрова, А. Прокопьева; Шупашкар районĕнчен—Кольворскине; Тăвай районĕнчен—Павлова, В. Филиппова.

Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçне хутшăнтарас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçленĕшĕн тата социализмлă ăмăртăва лайăх ертсе пынăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн Хисеплĕ грамотипе çаксене наградăлама йышăннă:

Е. Далдыринăна — ВЛКСМ Кувакино райкомĕн секретарьне, **В. Шишковăна** — Кувакино районĕнчи Çутĕç пайĕн заведующине, **А. Иванова**—ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарьне, **К. Павлова**—Вăрмар районĕнчи çутĕç пайĕн заведующине, **А. Федорова** — ВЛКСМ Çĕрпÿ райкомĕн секретарьне.

Шупашкар хулинчи интеллигенципе çамрăксен пухăвĕ

Июнĕн 2-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи интеллигенципе çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе совет интеллигенцийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Вишняков** юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик çакна палăртрĕ: ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XIII-мĕш пленумĕ çамрăксем хушшинче политикăпа воспитани ĕçне вăйлатма хушса хăварнă. Çав решение пурнăçласа, чылай вырăнсенче халь пуçламĕш çитĕнÿсем тунă. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ заводра çамрăк ачасемпе хĕрсем рабочи çамрăксен шкулĕсенче вĕренеççĕ, художествăллă пултарулăх ĕçне хутшăнаççĕ, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли кружока çÿреççĕ. Çакăн пек примерсем пирĕн нумай. Анчах та çакă вăл ĕçĕн пуçламăшĕ çеç пулса тăрать-ха. Çамрăксем хушшинче туса пыракан политикăпа воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха, совет интеллигенцийĕн комсомола çав çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмалла.

Воспитани ĕçне тĕрлĕ формăпа туса пымалла. Сăмахран каласан, инженер çамрăксене Агарков меслечĕ çинчен, Социализмлă Ĕç Геройĕсем çинчен лайăх, хавхалантармалла каласа пама пултарать, çамрăксене тĕрлĕ наукăпа техника ыйтăвĕсемпе лекцисем вуласа пама пултарать. Çамрăксен писательсемпе, артистсемпе композиторсемпе, наука работникĕсемпе тĕлпулусем туса ирттермелле. Массăллă физкультура ĕçне анлăрах сарса ямалла. Писательсемпе поэтсен çамрăксем валли çĕнĕ произведенисем çырмалла. Воспитани ĕçĕнче музейсемпе картина галлерейипе тата ыттисемпе те усă курмалла.

Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерÿ турĕ!—тет юлашкинчен докладчик.—Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланса кайрĕ. Пирĕн çамрăксен халĕ вăрçă вăхăтĕнчи пекех хастарлăн та вăя шеллемесĕр ĕçлемелле, хамăр Тăван çĕршывăн çарпа экономика хăватне тата ытларах ÿстерме пулăшмалла. Политикăпа воспитани ĕçне туса пырса, çамрăксене çав задачăна пурнăçлама мобилизацилемелле.

Доклад хыççăн прениcем пулчĕç.

Пельцих профессор ялхуçалăх институчĕ çамрăксем хушшинче лекцисем вулани çинчен каласа пачĕ. Çамрăксене Плетнев доцентăн лекцийĕсем уйрăмах кăмăла каяççĕ. Пельцих юлташ лекцисен пахалăхне лайăхлатмалли çинчен, студентсен наукăллă кружокĕсен ĕçне чĕртсе ямалли çинчен, хуларн çамрăксем хушшинче çутта кăларас ĕçе вайлатмалли çинчен каларĕ.

Медицина наукисен кандидачĕ Гутман юлташ врачсене халăха сыватмалли учрежденисенче ĕçлекен çамрăксем хушшинче воспитани ĕçне вăйлатма, вĕсен культурине хăпартма, вĕсене хăйсен ĕçне часрах вĕренсе алла илме пулăшма чĕнчĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн пĕр заводри комсоргĕ Соловьева юлташ завод клубĕ çителĕклĕ ĕçлеменнине палăртрĕ. Клуб наука ыйтăвĕсемпе ăнланмалла лекцисем сахал ирттерет. ВЛКСМ-ăн заводри комитечĕ художествăллă пултарулăх вечерĕсем ирттерет, çав вечерсене çамрăксем питĕ юратаççĕ. Анчах Халăх пултарулăхĕн çурчĕ заводри коллективсене пулăшмасть.

Поэт-фронтовик Владимир Алатырцев Хĕрлĕ Çарăн тăшмана çĕнтернĕ çыннисем çинчен каласа пачĕ, çамрăксене хастарлă та паттăр пулма вĕренме, Хĕрлĕ Çара кайма хатĕрленме чĕнчĕ.

Цфасман радиокружоксем, автосекцисем, куçса çÿрекен библиотекăсем организацилеме, çамрăксене техникăллă кружоксене явăçтарма сĕнчĕ.

Чăвашсен государство академи театрĕн артисчĕ Мудров театрăн хулари çамрăксемпе ытларах çыхăнмалли çинчен каларĕ.

Прениpе мĕн пурĕ 11 çын сăмах тухса каларĕç.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ хулари интеллигенцие комсомол организацийĕсемпе таччăнрах çыхăнма, вĕсене çамрăксем хушшинче политикăпа воспитани ĕçне лайăхлатас ĕçре пулăшма чĕнчĕ.

Пуху, пĕрсаслăн пулса, Чăваш республикинчи интеллигенцие чĕнсе каларĕ.

Пуху хыççăн Чăвашсен государство филармонийĕ концерт пачĕ.

ÇĔНĔ СПЕКТАКЛЬ

Чăвашсен Государство Академи театрĕ республика уявĕ тĕлне П. Н. Осиповăн «Тăван çĕршывра» ятлă çĕнĕ пьесине лартма хатĕрленет. Спектакльре театрăн пур артисĕсем те выляççĕ. Лартакансем — Мускавран ятарласа килнĕ Галицкий режиссер тата ЧАССР тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. Айзман.

Иван Владимирович Мичурин

(Вилнĕренпе 10 çул тултарнă тĕле)

Июнĕн 7-мĕшĕнче И. В. Мичурин вилнĕренпе 10 çул тултарать. Унăн ятне пĕтĕм тĕнче пĕлет, унăн чапĕ унăн ĕçĕсенче пурăнать. Халĕ Отечественнăй аслă вăрçă пĕтнĕ хыççăн, пирĕн халăх çĕнĕрен мирлĕ, пултаруллă ĕçе тытăнчĕ. Аслă пахчаçăн ĕçĕ пирĕн Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн татах та анлăнрах саралса каять. Ялсемпе посёлоксенче, çавăн пекех хуласенче те сад-пахчисем нумай ӳсеççĕ, вĕсенче тĕлĕнмелле панулмисемпе грушăсем, тĕрлĕрен çырласем пулаççĕ. Çавăн пек пахчасем çитĕнтернĕ çĕрте Мичуринсăр ăçтан ĕç тухать-ха! Вăл çкеха пире çурçĕрти сивĕ çанталăк тăракан вырăнсенче те кăнтăрти пекех паха çимĕçсем çитĕнтерме вĕрентрĕ.

Мичуринăн примерĕнчен · пĕр сыннăн пултаруллă пурнăçĕх халăха мĕн тери нумай усă кӳме пултарнине курма пулать. Унăн пысăк мар сад-пахчинчен пирĕн пĕтĕм çĕршыва çĕнĕ те паха çимĕçсем, çурçĕрте те ӳсме пултаракан çырла йывăççисем çав тери йышлăн саралчĕç. Хăйĕн сочиненийĕсенче Мичурин хăй шухăшласа кăларса çитĕнтернĕ паха çимĕç йывăççисен 126 сортне ытла кăтартса парать, вăл шутра улмуççисем, груша, айва, çурçĕрте ӳсекен пилеш, чие, черешня, слива, абрикос, пĕрлĕхен, хăмла çырли, виноград тата ытти тĕрлĕ йывăççем кĕреççĕ.

Мичурин пултарулăхĕн хăвачĕ çакăнта пулса тăрать: вăл—хăй тĕллĕн вĕреннĕ ученăй—хăйĕн паха наука теорине, хăйĕн оригиналлă паха меслечĕсене шыраса тупнă. Унăн теорийĕпе меслечĕсем пире çав енĕпе ĕçе йышлăн та анлăн туса пыма хĕçпăшаллантараççĕ. Мичурин наукипе усă курса, пирĕн çĕршыври нумай çынсем—ученăйсем, пахча ĕçне юратакансем тата ыттисем те аслă пахчаçăн ĕçне малалла аталантарса пыраççĕ.

Мĕн енĕпе паха-ха Мичурин теорийĕ? Ӳсен-тăрансен çĕнĕ сорчĕсене туса çитĕнтерес ĕçре унăн теорийĕ этеме мĕнле-ха çавăн пек вăйлă хĕçпăшал парать?

Энгельс çапла çырнă: «Çутçанталăк—диалектикăн сăнав чулĕ пулса тăрать, кучухнехи естествознани, çак сăнав çав тери пуян тата куллен-кун нумайланса пыракан материал панăскер, çавăнпа пĕрлех çакна кăтартса панă: çутçанталăкра, юлашкинчен, пурте диалектикăлла пулса пырать...» (К. Маркспа Ф. Энгельсăн сочиненийĕсем, XIV-мĕш том, 23 стр.). Мичурин хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чĕрĕ ӳсен-тăрансем хушшинче ирттернĕ, ӳсен-тăрансен тĕнчине сăнаса тата тĕпчесе пынă. Ӳсен-тăрансен тĕнчи вара ăна хăйĕн тарăн вăрттăнлăхĕсене уçса панă.

«Метафизикăна хире-хирĕçле пулса, диалектика çакăн пек вĕрентет: çутçанталăк япалисенче, çутçанталăк явленийĕсенче шалти хирĕçӳсем пур, мĕншĕн тесен вĕсен пурин те хăйсен отрицательнăй енĕпе положительнăй енĕ пур, хăйсен иртнипе пуласси, хăйсен пурăнса иртерекеннипе малалла аталанасси пур, çак хире-хирĕçлĕхсен кĕрешĕвĕ, киввипе çĕннин хушшинчи кĕрешӳ, вилсе пыраканнипе çуралса пыраканни хушшинчи кĕрешӳ, пурăнса иртерекеннипе аталанаканни хушшинчи кĕрешӳ вăл аталану процесĕн шалти содержанийĕ, хисеп улшăнăвĕсем пахалăх улшăнăвĕсене куçса пынин шалти содержанийĕ пулса тăрать». (Сталин, «Ленинизм ыйтăвĕсем», XI-мĕш изд. 539 стр.). Кашни чĕрĕ япалан унччченхи япаларан юлнă енĕсем пур тата кашни япала улшăнса пырать. Чĕрĕ япалара унччченхи япаларан юлнă енĕсем вĕсем—çав япалан иртнĕ историйĕн çирĕпленсе юлнă йĕрĕсем пулса тăраççĕ. Анчах чĕрĕ япаласем пурăнакан условисем тата чĕрĕ япаласем хушшинчи сыхăнусем çутçанталăкра пĕрмай улшăнса пыраççĕ. Ӳсен-тăрансемпе чĕрчунсем пурăнма пултарасси вĕсем улшăнма пултарнинчен, вĕсем çĕнĕ условисене хăнăхса пурăнма пултарнинчен килет.

Энгельс чĕрĕ тĕнчен эволюциллĕ аталанăвĕн вăйне киввинчен юлнă енсемпе çĕнĕ условисенче пурăнма хăнăхасси хушшинчи кĕрешӳре курнă. Çакă вăл киввипе çĕнни хушшинчи кĕрешӳ пулса тăрать те ĕнтĕ.

Ӳсен-тăрансенчи киввинчен юлнă енсене хавшатса пырас тата ӳсен-тăрансене çĕнĕ условисене хăнăхма пулăшас тĕлĕшпе Мичурин хăйĕн чаплă теорийĕпе меслечĕсене шыраса тупнă, вăл ӳсен-тăрансене воспитани парса, киввинчен юлнă енсене хирĕç кĕрешме пулăшнă.

Ку тĕлĕшпе Мичурин шыраса тупнă улмуççин çĕнĕ сорчĕ—бельфлер-китайка сорчĕ паха тĕслĕх пулса тăрать.

Америка улми—сарă бельфлер — вăл кăнтăрти сорт пулса тăрать, вăл çав тери тутлă тата хĕлле те нумаййччен сыхланса пурăнать. Анчах çав улмуççи пирĕн çурçĕрти çанталăкра хĕле тӳсеймест. Çав бельфлертан хĕлле тӳсекен улмуççи туса çитĕнтерес тесен, ăна Мичурин ĕçленĕ Козлов хули сывăхĕнче тĕл пулакан вăрман улмуççийĕ çумне кăна сыпмалла пек ĕнтĕ. Çав вăрман улмуççийĕ вырăнти сивĕ çанталăка тӳссе ирттерме питĕ лайăх хăнăхса çитнĕ. Анчах Мичурина, унăн теорийĕ тăрăх, çав вăрман улмуççи вырăнти условисене лайăх хăнăхса çитни чăрмантарнă та ĕнтĕ, мĕншĕн тесен çав улмуççи хăйĕн кивĕ енĕсемпе бельфлерăн паха енĕсене пусарса лартма пултарнă. Мичурин, çав вăрман улмуççийĕн кивĕ енĕсене хавшатса, икĕ тĕрлĕ йывăçăн пахалăхĕсене те пĕтĕçтерсе тăракан çĕнĕ йывăç туянма ĕмĕтленнĕ. Çавăнпа та вăл бельфлера Козлов патĕнче ӳсекен вăрман улмуççийĕ çумне мар, китайка тата райская текен улмуççисем çумне сыпнă. Китайка вăл—урăх йышши улмуççи, Хĕвелтухăç-Çĕпĕрти улмуççисемпе сывăх тăракан йывăç.

Çак тĕслĕхре ĕнтĕ пĕр-пĕринчен питĕ аякра тăракан икĕ тĕрлĕ йывăça пĕтĕçтерсе, пĕр йывăç туяние курма пулать. Çак меслетпе Иван Владимирович питĕ анлăн усă курнă. Чăн та, çав улмуççисем—Америка бельфлерĕпе китайка пачах та тĕрлĕ йывăççем пулса тăраççĕ, географи тĕлĕшĕнчен те вĕсем пĕр-пĕринчен питĕ аякри вырăнсенче ӳссе çитĕннĕ. Мичурин çавăн пек, пĕр йывăçăн тĕпрен пыракан кивĕ енĕсене хавшатса, пачах та çĕнĕ ӳсен-тăрансем çитĕнтерет, çав ӳсен-тăрансенче вара икĕ тĕрлĕ йывăçăн пахалăхĕсем те палăрса тăраççĕ. Анчах та çакă вăл çĕнĕ сорт туса кăларас ĕçĕн пуçламăшĕ кăна пулма пултарать-ха.

Çапла бельфлер-китайка сортне Мичурин пĕр тĕп кăна çитĕнтернĕ пулнă. Çав улмуççи хăйĕн пĕрремĕш çимĕçĕсене парсан, вĕсем хăйсене шухăшласа кăларакан çынна çырлахтарайман, вĕсем вĕтĕрех пулнă, ытлашши ир пиçнĕ, çавăнпа та нумай вăхăт хушши сыхланса выртма пултарайман. Мичурин хăйĕн çĕнĕ сортне, вăл аталанса пынă май, тӳрлетсе, лайăхлатса пынă. Вăл çав çамрăк йывăç çумне татах бельфлер туратне касса сыпнă, унтан вара хĕле çăмăллăн тӳссе ирттерекен ытти тĕрлĕ улмуççи сорчĕсене те сыпнă. Çавăн хыççăн вара бельфлер-китайкăн улмисем шултăрарах пула пуçланă, ыртасса та нумайрах вăхăт хушши сыхланса выртма пултарнă.

Мичурин ӳсен-тăрансене çамрăк чухне урăхлатса çĕнетме çăмăлраххине нумай хутчен кăтартса панă.

Пĕр-пĕринчен питĕ аякра тăракан ӳсен-тăрансене пĕтĕçтерсе пĕр ӳсен-тăран туни тата çав ӳсен-тăрана малалла пăхса, лайăхлатса пыни этем хăйĕн творчествăлла ĕçĕпе чĕрĕ тĕнчери кĕрешĕве Энгельс çырнă пек ертсе пыма пултарнине кăтартса парать.

Мичурин тата унăн ĕçне малалла аталантарса пыракан Лысенко академик çутçанталăкăн диалектикăллă явленийĕсене анлăн уçса паракан наукăллă теори мĕн тери пысăк вăй пулса тăнине кăтартса параççĕ. Çакна ăна Мичуринпа Лысенко творчестви совет халăхĕ хушшинче — колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче питĕ анлăн саралса кайни те кăтартса парать. Мичурин çулĕпе пыракан творчествăллă дарвинизм пирĕн çĕршывра наукăн чăннипех те пĕтĕм халăх юхăмĕ пулса кайрĕ.

Мичурин питĕ пысăк ученăй кăна мар, вăл аслă мастер-изобретатель пулнă. Вăл çапла çырнă: «Мĕнле те пулин искусствăн, наукăн е ремеслан техникине вĕренсе алла илмен çын нихăçан та мĕнле те пулин чаплă ĕç тума пултараймасть», тенĕ. Хăй вăл техникăна çав тери тĕплĕн вĕренсе алла илнĕ çын, хăй ĕçĕн мастерĕ пулнă. Çакă вара ăна чĕрĕ çутçанталăкăн вăрттăнлăхĕсене тарăннăн уçса пама тата вĕсемпе халăхăн пысăк ĕçĕшĕн çав тери вăйлăн усă курма май панă.

Мичурина наукăн практикăллă аслă çитĕнĕвĕсем патне илсе çитернĕ пурнăç çулĕ чăннипех те паттăрла ĕçĕн çулĕ пулса тăрать. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕ валли пĕр пысăк задача лартнă пулнă, çав задачăна вăл, нимĕнле йывăрлăхсемпе чăрмавсене пăхмасăрах, хурçă пек çирĕплĕхпе çине тăрса пурнăçа кĕртнĕ.

Мичуринăн геройла ĕç çулăмĕпе çунса тăнă пурнăçне совет халăхĕ питĕ лайăх пĕлет. Эпĕ çакна кăна палăртасшăн: патша Российинче вăл тăр пĕччен ĕçленĕ, ун çине темĕнле «чудак» çине пăхнă пек пăхнă, унăн ĕçне сад-пахчи лартса тăвас ĕçе юратакан уйрăм çынсем кăна хаклама пултарнă. Халăхшăн питĕ паха пулса тăракан çав пысăк ĕçре хăйне нимĕнле пулăшу та паманнишĕн Мичурин питĕ хурланнă, хăй ватăлсан унăн пĕтĕм ĕçĕ пĕтсе ларать тесе шутланă.

Анчах 1917 çулхи Октябрь çитрĕ. Козлов хули урамĕсенче пăшал пенĕ сасăсем кĕрлесе тăнă-ха, Мичурин çавăн чухнех уездри çĕрĕç пайне пынă та: «Çĕнĕ влаçшăн ĕçлес тесе шутлатăп», тенĕ. Çĕнĕ, Совет влаçĕ Мичурина çийĕнчех хăйшĕн питĕ кирлĕ, тăван çын вырăнне хурса йышăннă. Вăл халĕ ĕнтĕ пĕччен пулман, вăл пирĕн совет тĕнчине илемлетме халиччен нихăçан пулман майсем шыраса тупнă. Ленинпа Сталин Мичуринпа унăн ĕçĕ çине питĕ тимлĕн пăхнă. Мичурин патĕнче, унăн улах вырăнта ларакан пахчинче, Михаил Иванович Калинин икĕ хутчен пулнă. Козлов хули улмуççисемпе çырла-çимĕç йывăççисем çитĕнтерекен чи пысăк центр пулса тăнă, унта наукăпа вĕренӳ учрежденийĕсем ӳссе ларнă, Мичурин сачĕ анлăн саралса, промышленность валли чĕртавар паракан аслă сад пулса тăнă. Козлов хулине Мичуринск тесе ят панă.

Эпĕ, Мичурин патĕнче сахал мар пулса, унпала калаçнă. Унпа калаçнă чухне манăн яланах пĕр ырă шухăш-кăмăл пулнă: вăл хăйĕн ĕмĕр-ĕмĕрех çамрăк та хăюллă, çĕнĕ шухăшĕпе, хăй яланах малалла кайма туртăннипе пирĕн çамрăк та аслă çĕршыва мĕн тери çывăх тăрать!

Мичурин чăннипех те халăх ученăйĕ пулса тăнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук ĕнтĕ. Унăн чаплă ĕçне малалла аталантарса пыракансем, пĕтĕм халăхпа пĕрле. Ленин—Сталин çулĕпе, этемлĕхĕн телейлĕ те хĕрӳ ĕçлĕ пурнăçĕн çутăлса тăракан çĕнĕ тӳпи патнелле утаççĕ.

Академик Б. КЕЛЛЕР.

Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăну пирки США конгресĕн членĕсен ушкăнĕ туса ирттернĕ пресс-конференци

ВАШИНГТОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Представительсен палатин членĕсен ушкăнĕ, прогрессивнăй демократсем Коффипе Делеси ертсе пынипе (Вашингтон штатĕнчен), государство секретарĕн обязанноçĕсене туса пыракан Грю патне çырнă çырăва пичет представителĕсене парас шутпа пресс-конференци туса ирттернĕ. Вăл çырура çапла ыйту лартнă: икĕ союзник хушшинче сиксе тухма пултаракан хирĕçӳсене татса парас тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Штатсем Рузвельт тытса пынă политикăран пăрăнман-и? Çырура çавăн пекех тата Пĕрлешӳллĕ Штатсем Хĕвелтухăç Европăра Рузвельт тытса пынă политикăран пăрăнман-и, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Англин тулашри политикин хӳрешки пулса тăман-и тата Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзне хирĕçле блока кĕмен-и? тесе ыйтнă.

Çак ыйтусем çине Грю «çук» тесе ответлени çинчен пĕлтерсе, Делеси çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинче ниепле хирĕçӳ те çук, тесе Грю уйрăмах çирĕплетсе каларĕ.

Грю отвечĕсемпе çырлахрăр-и? тесе ыйтсан, Коффи çапла каланă: çук, çырлахман, тенĕ. Унтан вăл çапла хушса хунă: Сан-Франциско хулинчи конференци ăнăçлă вĕçленмесен, вăрçă ахалех пулнă пулĕччĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинче пĕр-пĕринчен сивĕнесси пулмалла мар, тенĕ вăл.

Делеси каланă тăрăх, Грю панă ответсем питĕ лайăх, анчах та государство депаратаменчĕ хăйĕн позицийĕ çинчен каласа панине ĕçпе çирĕплетмелле.

Конгресс членĕ Бэйли демократ (Хĕвеланăç Виргини штатĕнчен) çапла каланă: государство департаменчĕн шухăшĕсем тĕрĕс, анчах та вăл шухăшсем пурнăçа кĕрессине ĕненесчĕ, тенĕ вăл. Конгресс членĕ Паттерсон демократ (Калифорни штатĕнчен) çапла каланă: ответсем лайăххипе эпĕ те килĕшетĕп, анчах та Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Совет Союзĕ пирки пĕр сăлтавсăрах тивĕççĕр сăмахсем каласа тăнине шута илсен, çак ответсене ĕçсемпе çыхăнтарма питĕ йывăр.

Кун хыççăн Коффи сăмах тухса каланă. Ответсем çырлахтарни çинчен калакан шухăшсемпе килĕшсе, вăл çапла каланă: çав ответсене çирĕплетекен ĕçсем тăвассине кĕтмелле пулать ĕнтĕ, тенĕ. Манила хулинче Испанин генеральнăй консулĕ пулнă паллă фалангист тата Япони шпионĕ Дель Кастаньо çине епле пăхни çинчен асăрхаттарса тата союзниксен самолечĕсем Бангкок хули çине бомбăсем пăрахнă вăхăтра государство департаменчĕ Таи посланникне йышăнни çинчен асăрхаттарса, Коффи çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем тăшмансем çине çавăн пек туслăн пăхни питĕ тĕлĕнтерет, çав вăхăтрах Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăйлă союзник çине ĕненмесĕр пăхаççĕ. Вăл союзникпа килĕштерсе ĕçлени пĕтĕмĕшле мир тума тата Сан-Франциско хулинчи конференцин ăнăçлăхĕшĕн питĕ кирлĕ, тенĕ. Коффи уйрăмăнах çакна палăртнă: «Хĕрлĕ» текен сăмаха пĕрмаях асăнса палăртни мана питĕ шиклентерет, мĕншĕн тесен унтан Гитлер усă курнă методсен шăрши вăйлăн çапать.

Корреспондентсем панă ыйтусем çине ответлесе, Коффи çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Англи политикин хӳрешкинче пымаççĕ, тенĕ.

Коффи калани çумне хушса, Паттерсон çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсене Грю третейски судья вырăнне хурса шутлать, мĕншĕн тесен Пĕрлешӳллĕ Штатсен ытти аслă державăсемпе нимĕнле хирĕçӳ те çук.

Коффи пĕлтернĕ тăрăх, Грю Совет Союзĕ хăй шанманни çинчен каланă. Елĕкхине шута илсен, Совет Союзĕ шанмасăр тăни тĕрĕс пулмасть-ши? тесе ыйтнă Паттерсон. Коффи çапла каланă: Совет Союзĕ мĕн пирки шанманнине эпĕ пĕтĕмпех ăнланатăп, тенĕ.

Польша правительстви пирки Ялтăра йышăннă килĕшĕве епле ăнланмалли çинчен тавлашни пирки (ку ыйтăва та палата представителĕсен членĕсен ушкăнĕ Грюпа пĕрле сӳтсе-явнă) Делеси çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсем ку ыйтупа, Грю каланă тăрăх, çапла шутлаççĕ: Ялтăри килĕшӳ тăрăх Польшăн Лондонри эмиграцири правительствин членĕсене хутшăнтарма йышăнман. Лондонри поляксенчен пĕр Миколайчик ятне кăна асăннă. Делеси çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Польшăра чăн-чăн представителлĕ правительство тăвасшăн кăна тăрăшаççĕ, тесе пĕлтерчĕ Грю, тенĕ.

Государство департаментĕнче Совет Союзне хирĕç пыракан çынсем пурри çинчен Коффи çапла каланă: государство департаменчĕн представителĕсем вырăн союзникне кӳрентерекен сăмахсем калани халăха йăлăхтарчĕ ĕнтĕ, тесе пĕлтерчĕ конгресс членĕсен ушкăнĕ Грюна. Коффи пĕлтернĕ тăрăх, Грю çапла ответленĕ: кирек мĕнле организацире те пĕр пек мар шухăшсем пулма пултараççĕ, анчах та государство департаментĕнче Совет Союзне хирĕç пыракан çынсем пурри çинчен эпĕ пĕлместĕп, тенĕ. Грю тата Ачесон Совет Союзне хирĕç пыракан çынсен шутне кĕмеççĕ, тесе, Коффи малалла çапла каланă: ман шутпа, государство департаментĕнчи хăшпĕр çынсем Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлас текен çынсене пулăшаççĕ. Çавăн пек çынсен шутне, Коффи каланă тăрăх, чи малтан картель представителĕсем тата Польшăн паллă эмигранчĕсен çĕрĕшĕн тăрăшакан хăшпĕр ытти группировкăсем кĕреççĕ.

Делеси çапла каланă: Совет Союзĕ çĕр çинчи çар держави пулса тăрать, Пĕрлешӳллĕ Штатсем—чи пысăк тинĕс-çар держави шутланаççĕ. Иккĕш пĕрле вĕсем пĕтĕмĕшле мир туса хума пултараççĕ. Делеси çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинчи союза Англи те кĕрĕ, Англи чăннипех мир туса хурасшăн пулмалла, тенĕ.

Коффи çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн Совет Союзĕн çĕрĕ çине çарпа пырса кĕни Америка историйĕнчи чи намăс япала пулса тăрать, тенĕ.

Корреспондентсем панă ыйтусем çине ответлесе, Делеси Сан-Франциско хулинчи конференцири США делегацийĕн профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн делегачĕсем пирки йышăннă позицине критикленĕ.

Юлашкинчен Бэйли çапла каланă: çак пресс-конференцие организацилене ушкăна Совет Союзĕ майлă ушкăн тени йăнăш пулнă пулĕччĕ. Ăна Америка майлă ушкăн. Совет Союзĕпе пĕрлешсе ĕçлесе мир туса хурасшăн тата Совет Союзне хирĕçле тактикăна пĕтерсе хурасшăн тăракан ушкăн тени тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ. Ĕнер Грюпе калаçнă ушкăна çак çыру çине алă пуснă çынсем пурте кĕнĕ.

Де Голль генерал пресс-конференцире тухса калани

ПАРИЖ, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла де Голль генерал пресс-конференцире Сирипе Ливанри ĕçсем пирки каланă. Хăйĕн сăмахне вăл историллĕ кĕске обзортан тытăннă. Ливанра тата пуринчен ытларах Сирире пулса тăнă лару-тăру мĕн пирки пулнине каласа пама питĕ хĕн, тенĕ вăл. Малалла де Голль генерал çапла каланă: географипе политика тĕлĕшĕнчен Египет, Ирак тата Палестина пĕр пек пулнă тесе калама питĕ хĕн. Сири хăй те географипе политика тĕлĕшĕнчен пĕр пĕтĕм япала пулни çинчен калама хĕн. Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕçсем çине куçса, де Голль генерал Левант çĕршывĕсенче Франципе Британи вăйĕсем пурри çинчен асăннă. Вăл çапла каланă: Франци çарĕсене Бир-Хаккейм патĕнче çапăçма илсе кайса, Левантра 5.000 çынна яхăн шутланакан çар кăна хăварнă пулсан, Англин унта 600 пин çынна яхăн шутланакан çар пулнă, вăл шутра 9-мĕш арми пулнă. Çакăн хыççăн де Голль генерал Британин нумай агенчĕсем ĕçлени çинчен, вĕсем Франци интересĕсене сиен туса, пăлхавсем кăларни çинчен каланă. Апла пулин те Франци, тенĕ де Голль генерал, çав йывăрлăхсем çинчен калама шутламан. Хăшпĕр чухне Франци ун пек япаласем пуррине пытарма та хăтланнă. Франци Сирипе Ливан республикисемпе калаçма хăтланнă, экономика ыйтăвĕсене татса парас. Çавăн пекех Англи тата халĕ США хăшпĕр базăсемпе усă курнă пек, вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе икĕ договор тума сĕннĕ. Майăн 8-мĕшĕнче, тенĕ малалла де Голль генерал, Левант çĕршывĕсен икĕ правительствисене те çакăн пирки сĕнӳ тунă пулнă. Анчах Бэйне генерала каласусем пулма пултарайманни çинчен пĕлтернĕ. Çакăн хыççăн часах Левантра хирĕçӳсем тухса кайнă. Хĕçпăшалланнă бандăсем, час-часах Британи хĕçпăшалне алла илнĕскерсем, уйрăм француз гражданĕсене тата французсен посчĕсене тапăннă. Франци çарĕсене йĕрке тума питĕ йывăр пулнă. Майăн 30-мĕшĕнче каçхине, Британи правительстви пеме чарăнма пусахласа ыйтнă чухне тата пĕтĕм пуçарăва хăй аллине илесси çинчен пĕлтернĕ чухне, лару-тăру çакăн пек пулнă ĕнтĕ. Майăн 30-мĕшĕнче 23 сехетре Франци правительстви хăйĕн çарĕсене пеме пăрахма тата хăйсен вырăнĕсенчех юлма приказ панă. Де Голль генерал çапла асăрхаттарнă: Черчилль çырăвне пăна общинăсен палатинче Иден вуласа панă хыççăн пĕр сехетрен тин панă. Вăл çыру, тенĕ де Голль генерал, Франци çарĕсене панă распоряженисене нимĕн те улăштармасть. Левантри йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе Франци правительстви пуçарăва хăй çине илнĕ те хăйĕн çарĕсене, союзниксемпе хирĕçсе каяс мар тесе, вырăнтах юлма хушнă. Пăртак чĕнмесĕр тăнă хыççăн де Голль генерал çапла каланă: Франци каласусем пуçласа ярасси çинчен хăйĕн шухăшне уççăнах пĕлтерчĕ, анчах вăл каласусем араб çĕршывĕсене тивекен пĕтĕмĕшле ыйтусем тăрăх пулмалла. Вăл каласусем Хĕвелтухăçĕнче сиксе тухнă пит паха тата чылай йывăр çĕнĕ ыйтусене татса памалла. Кунта пур нацисен те хăйсен интересĕсем пур. Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен позицийĕсене палăртса пачĕç. СССР ку ыйтупа уйрăм пĕлтерӳ пичетлесе кăларчĕ. Левант ыйтăвне, тенĕ малалла де Голль генерал, пĕр-пĕринпе тавлашас енĕпе мар, пĕр-пĕрин интересĕсене шута илсе татса памалла. Ку ыйтупа Франци позицийĕ питĕ паллă. Ку ыйтăва татса панă çĕрте Сан-Франциско хулинчи конференци палăртнă пек тумалла.

Хăйĕн сăмахне вĕçлес умĕн правительство пуçлăхĕ Франципе Британи халăхĕсем хушшинче çирĕп туслăх пулнине палăртса хăварнă.

Де Голль генерал малалла çапла каланă: Француз халăхĕ хăйĕн правительстви тавра унăн интересĕсене хисеплеттермешкĕн пĕрлешнĕ, тенĕ.

Дамаск хули çине персе тăнă пирки де Голль генерал çапла каланă: Дамаск çине чăнахах та пенĕ, тенĕ. Анчах унта артиллерин пĕр батарейи кăна тата пĕртен пĕр самолет кăна пулнă, тенĕ.

Çак пĕтĕм тĕнчери ыйтăва татса парас шутпа вăл ыйтупа интересленекен пур çĕршывсен те пĕрле пулăшмалла, тенĕ.

Франци правительствинчи улшăнусем

ПАРИЖ, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян министрсен совечĕн ларăвĕ хыççăн официальнăй пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: вырăнтан тухнă Ренадье вырăнне снабжени министрĕ пулма Кристиан Пинона лартнă, информаци министрне Тетжене де Ментон вырăнне юстици министрĕ пулма лартнă. Информаци министрĕ пулма Супеле лартнă. Юстици министрĕ пулнă де Ментона вăрçă преступникĕсене наказани парас тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери комиссири Франци делегацийĕн руководителĕ тунă.

Пĕлтерӳре кăтартнă тăрăх де Голль правительствăна çапла пĕлернĕ: Европăра вăрçă пĕтнĕ пирки тата тыткăна лекнисене хăйсен тăван çĕршывĕсене таврăс ĕç вĕçленсе пынă пирки, çак çул пĕтиччен çĕршывра пĕтĕмĕшле суйлав туса ирттерме кирлĕ, тенĕ. Министрсен совечĕ правительство пуçлăхĕн шухăшне пĕрсаслăн ырланă.

Петэна халех суд тума ыйтаççĕ

ПАРИЖ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Халăх ирĕклĕхĕн Парижри комитечĕ резолюци йышăннă. Çав резолюцире Петэна, Лавале тата ытти вăрçă преступникĕсене халех суд тума ыйтнă.

Тăшмана хирĕç кĕрешекен халăх совечĕн председателĕ Луи Сайян комитет ларăвĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Петэна халех суд тума пуçламалла. Петэн Францие Германи çĕнтериччен мĕнле ĕçлесе пынине тата Францие нимĕçсем йышăнса тăнă вăхăтра вăл мĕн тунине халех халăха пĕлтермелле, тенĕ. Сайян çар совечĕ Петэнран ку таранччен те маршал званине туртса илменни пирки хăй тĕлĕнни çинчен каланă. Юлашкинчен Сайян çапла каланă: Петэн Виши «правительстви» вăхăтĕнче Дарнан милицийĕ тунă преступленисемшĕн те ответ тытма тивĕçлĕ, тенĕ.

Грецири пуканелле правительствăн членĕсем пирки йышăннă приговор

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран Грецин пуканелле правительствинче пулнă 33 «министра» суд туса пĕтерсе, вĕсем пирки приговор йышăнни çинчен пĕлтерет. Пуканелле правительствăн премьер-министрĕ пулнă Чолакоглуна, 1941 çулта Салоники хулинче нимĕççемпе мир тăвасси çинчен договор тунăскере, вĕлермелле тунă. Анчах та приговорта ăна çăмăллăхсем пама пултарни çинчен кăтартса хăварнă.

Хăйсемсĕр суд тунă икĕ «Греци министрне» — квислинговецсене Ковзаванисна Пиронникоса вĕлермелле тунă. Премьер-министрсем пулнă Райниса тата Логофетопулоса ĕмĕрлĕхе ирĕксĕрлесе ĕçлеттермелле суд тунă. Логофетопулоса хăйсĕрех суд тунă.

Крит утравĕн генерал-губернаторĕ пулнă Ионип Пассадакиса тата снабжени «министрĕ» пулнă Ионис Караманоса ĕмĕрлĕхе тĕрмере хупса усрамалла тунă. 12 «министра» 5 çултан пуçласа 20 çула çити тĕрмене хупса усрамалла тунă, 14 айăпланмакана тӳрре кăларнă.

Сирипе Ливанри лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: шанчăклă вырăнтан илнĕ хыпарсем тăрăх, Англи командованийĕ Сирири халăх пурăнакан районсенчен Франци çарĕсене пурне те уйрăм тăракан лагерьсене кăларттарса каясшăн, Франци çарĕсем Сирире ăста-ăста тăмаллине кăтартса парас ыйтăва халĕ те татман-ха.

СССР Совет писателĕсен Союзĕн Правленийĕ çав тери чаплă совет писателĕ, Сталинла премин лауреачĕ Викентий Викентьевич **Вересаев** (Смидович) вилни çинчен хуйхăрса пĕлтерет.

Пĕр заводăн иртнĕ уйăхри ĕçĕн итогĕсем

Якушин юлташ главнăй инженер пулса тăракан завод май уйăхĕнчи программăна 109 процент тултарнă. Иртнĕ уйăхра Каневский юлташ ертсе пыракан цех уйрăмах тухăçлă ĕçленĕ. Ку цех пур тĕрлĕ изделисене те планпа палăртнă чухлех туса кăларнă. Сверловщица Морозова нормăна 300—350 процент тултарса пынă. Сверловщица Артемьева кунсерен 600 деталь вырăнне 1600 деталь туса панă.

Коропеп юлташ начальник пулса ертсе пыракан цех коллективĕ заводăн куçса çӳрекен [illegible] хавне апрель уйăхĕнчи ĕççемшĕн [illegible] чух, май уйăхĕнчи плана срокчен тултарма сăмах панăччĕ. Коллектив хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртнĕ: иртнĕ уйăхри плана майăн 30-мĕшĕнчех тултарнă. Ку цехра Винокурова мастерăн участокĕпе Рябенков бригади лайăх ĕçленĕ.

Кинзбургскипе Оржебовский юлташсен цехĕсем те май уйăхĕнчи заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Детальсем хатĕрлекен цехсем те уйăхри плансене пĕтĕмпех тултарнă.

Завод коллективĕ тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе пырса, II-мĕш квартал планне республика юбилейĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Учительсен канмалли çурчĕ

Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕнче Атăлăн сулахай енче илемлĕ вырăнта учительсен канмалли çурчĕ ĕçлеме пуçларĕ. Кунта кашни сменăра 150 çын 12 кун хушши канмалла. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен унта 1.000 учитель пулмалла.

Путевкăсен 20 процентне Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, ĕç пенсионерĕсене, паллă учительсене тата йывăр çын пирки декретлă отпуск хĕрарăм-учительницăсене тӳлевсĕр памалла.

Канмалли çуртра лайăх столовăй тата общежити пур. Халĕ физкультурăпа спорт инвентарĕсем тата пулă тытмалли хатĕрсем çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ, физкультура площадкине юсаса йĕркеленĕ. Уйрăм çуртра библиотека, кĕнеке-хаçат вуламалли тата тĕрлĕ вăйăсем выляммалли пӳлĕмсем пур. Канмалли çуртра Чăваш АССР-че халăха вĕрентес енĕпе тунă çитĕнӳсене кăтартакан выставка пулать.

Пионер лагерĕсенче 6072 ача канмалла

Ĕнтĕ вĕренӳ çулĕ пĕтрĕ, кашни шкул ачи пионер лагерьне кайса канма шухăшлать. Кăçал пирĕн республикăри нумай районсенче пионер лагерĕсем, хуласенче ачасен канăç площадкисем уçăлаççĕ. Пионер лагерĕсенче пурĕ 6.072 ача канмалла. Лагерьсене чи малтанах Отечественнăй вăрçăра пулнă çынсен ачисене яраççĕ. Сывлăхĕсем начартарах ачасем валли уйрăм лагерь пулать.

Нумай ачасене путевкăсене профсоюз, комсомол организацийĕсен тата фронтовиксен çемьисене пулăшакан отделсен шучĕпе тӳлевсĕр памалла тунă.

Сунарçă пăшалĕсене тума пуçланă

Тулăри пăшал завочĕ сунарçă пăшалĕсене тума пуçланă. Унта тунă пăшалсем лайăх переççĕ тата питĕ илемлĕ.

Иккĕмĕш çур çулта икĕ кĕпçеллĕ курокла пăшалсем йышлăн туса кăларма пуçлаççĕ.

Сунарçă пăшалĕсен специалисчĕсене хатĕрлес шутпа заводра шкул-лаборатори уçăлать (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ. г. Чебоксары, ул. Володарского 3, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышл[illegible] пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издатель[illegible] 0—23.

НТ 00609. [illegible] Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № [illegible] Тираж 16.000